Т. В. Денисова

**Петĕр Хусанкай хайлавĕсенчи междометисен стиль функцийĕсем**

Междометисем - туйăма, кăмăл хусканăвне, хистеве чи кĕскен пĕлтермелли хатĕрсем. Вĕсем уйрăм çыннăн кăмăлĕ улшăннă чух пулакан туйăма кăтартакан сăмахсем шутланаççĕ.

Междометисем чĕлхене туйăмлă тăвас тĕлĕшпе пысăк пĕлтерĕшлĕ. Вĕсемпе ытларах кулленхи калаçура усă кураççĕ. Калаçнă чух эпир сăмахсене пĕрерĕн-пĕрерĕн илсе çыхăнтаратпăр пулсан междометисемпе кун пек чăрманма кирлĕ мар. Вĕсене чĕлхери сăмахсен йышĕнчен суйласа илмелле те пуплеве кĕртсе лартмалла, хăвна кирлĕ пек усă курмалла.

Чăваш чĕлхинчи междометисемпе кулленхи калаçура çеç мар, илемлĕх стилĕнче те тăтăшах усă кураççĕ. Н. А. Андреев палăртнă тăрăх, вĕсемпе стиль енĕпе усă курасси çак сăмахсен чĕлхери несĕлĕнчен килет [1, 149]. Междометисем пĕтĕм шухăша эмоци сĕмĕ параççĕ. Тĕслĕхрен, *Эх, çамрăклăх, çамрăклăх! Чечеклĕ çаран тарăх юпах тиха пек ĕрĕхсе чупнă вăхăтра чарусăр, алхасуллă çав эсĕ: никам та ирĕксĕрлесе утланса лараймасть, никам та çăварлăхлаймасть, тытса чараймасть пек туйăнать пире! Чармалла та мар-и: юланутлă-вăхăт хăех çăварлăхласа пусăрăнтарать сана* (Ю. Скворцов). Кунти *Эх!* междомети авторăн шухăш-кăмăлĕпе çыхăнса тăрать, мĕнпур пуплев сыпăкне эмоцилĕх кӳрет.

Междометисем калаçăва е çырăва чĕрĕрех, сăнарлăрах, витĕмлĕрех тума пулăшаççĕ, çавăнпа та вĕсемпе çыравçăсем час-часах усă кураççĕ.

Чăваш поэзийĕн аталанăвĕ çинчен сăмах хускатсан тӳрех çутă çăлтăр Петĕр Хусанкай аса килет. Вал хăй умĕнхи тата хăй вăхăтĕнчи чăваш поэзийĕн мĕнпур çитĕнĕвĕсене ытамласа çĕнĕ пахалăхлă иксĕлми пуянлăх хăварнă. Илем туйăмĕ, чĕлхе пуянлăхĕн çыпăçулăхĕ-çаврăнуçăлăхĕ, шухăш уçăмлăхĕ, ырă ăспа аптраманлăх - çак пахалăхсене пула поэт çырса хăварни чăваш халăхĕн чунĕпе шухăш-туйăмĕсене палăртакан куç кĕски пулса тăрать [2, 5].

Эпĕ хам ума П. Хусанкай хайлавĕсенчи междометисене тишкерес тĕллев лартрăм. Тĕпчевçĕсем сăнанă тăрăх, çак поэтăн эмоциллĕ чĕлхепе усă курас ăсталăхĕ тĕлĕнмелле пысăк пулнă. Ку вăл унăн тĕрлĕ тапхăрта çырнă хайлавĕсенче лайăх курăнать:

... *Çичĕ ютра, хытлăхра,*
*Нарспи чунĕ касăлнă.*
*Тăлăх юман тупăкра*

*Сетнер кунĕ таталнă.*

*Çаплах май та, ах, çаплах*
*Çухалĕ-ши яш ĕмĕр,*
*Сетнер пекех кăлăхах*
*Тăрса юлим, Илтимĕр.*
*Эх, Илтимĕр, Илтимĕр!*
*Илтетни эс ман сасса?*
*Тарар мар-ши иксĕмĕр*
*Пĕр юланут утланса?..*

«Хĕр йĕрри» [2, 42].

Ку сăвăри междометисем хĕр хăйĕн юратăвĕшĕн тунсăхланине, пăшăрханнине палăртма пулăшаççĕ.

П. Хусанкайăн лирикăлла геройĕ хăйĕн шалти тĕнчине тĕпчет, хуйхи-суйхипе савăнăçне, чун пурнăçне пытармасăр палăртать. Çакна кăтартма междометисем те пулăшаççĕ:

*Эх, тантăшам. Мана эс ăнланмарăн,*
*Пĕлмерĕн эс мĕнле эп çыннине.*
*Хура куçа, хура сӳçе мухтарăн,*
*Анчах туймарăн камшăн çуннине...*

«Икĕ сыру» *[2,* 86].

Е тата:

*Ах, ĕмĕрех асăмран каяс çук:*
*Эп унпала юнашар ларнă чух –*
*Тен, юлашки пек уяр кĕрхи каç,*
*Шăп... кăшт анчах çирĕксем хумханаç.*
*Çепĕç саспа юхăм шыв кĕрлени,*
*Шыв юррипе тăп çыран тĕлĕрни –*
*Пурте çаксем кунти ма, инçетри...*
*Эх, ачашлать-çке чуна хĕр чĕри!*

«Сăвăç» [2, 70].

Хусанкай пултарулăхĕн никĕсĕнче - ял пурнăçĕ, халăх сăвви-юрри, йăли, ĕçĕ çинчен çырнă хайлавсем. Вĕсене те поэт междометисем тăтăшах кĕртет:

*Эх, мĕскершĕн.*
*Эх, мĕскершĕн*
*Эп ларатăп пăчăхса...*

*Эх,  вырар-и,*
*Юр юрлар-и -*
*Эпир килнĕ кĕрĕшсе...*
«Хир  юрри»  [2,  54].

Тепĕр  сăввине илер:
...   *Телефонĕ шăнкăр-шăнкăр:*
 *- «Çутталла» колхоз-и ку?*
*Ну, хăçан çапма пуçлатăр?*
*Ха,  мĕнле çанталăку!*
«Çуллахи талăк»   [4,   295].

«Юпах тихара»  та  междометисемпе çине-çинех  усă  курнă:
...  - *Ăçта,  ну,  ăçта эс васкатăн*
*Кăтра  çилхӳне вĕçтерсе...*
*Ну,  ма кĕçенетĕн хаваслăн*
*Çитетĕп тесе вакуна...*
*Ну, кам сан çине вара ларĕ,  -*
*Чупайăпăр çеç çăварни* [2, 63].

П. Хусанкай хайлавĕсенче эмоци междометийĕсем кăна мар, хистев междометийĕсем те час-часах тĕл пулаççĕ: *атьăр, чим, ме, тики-тики, ну, хас, тпру* т.ыт.те. Вĕсенчен хăшĕ-пĕрисем сăрă ячĕ пек  илтĕнеççĕ. Тĕслĕхрен:  *«Хас!», «Тики-тики».*

*Вăтакасра сап-сарă хĕр ача*
*«Тики-тики»  тет шурă хурсене.*
 *Вăл хапхаран курать халь хур анчах,*
 *Ăшталанать кĕртесшĕн картишне...*
*Вăл вулĕ-ха ӳссен çак сăввăма,*
*Хăйне паллаймĕ: йышлă ун пекки.*
*Эп пурăнап çавсемшĕн савăнма,*
 *Аçта-ши халĕ ман «тики-тики»?..*
«Тики-тики»  [3,  43].

Хăш-пĕр  междометисем  сăвă тытăмĕнче  палăраççĕ:
*Атьăр паян тачăран та  тачă*
*Ĕç çарĕпе ыткăнар малалла...*
«Вун  виççĕ»   [2,  453].

*Чим. Нимĕскер те ан чĕн,*

*Тин çăлтăрсем пытанчĕç,*

*Ав юлашки йăр! шурĕ,*

*Сĕм пĕлĕте йĕр турĕ.*

*Чим. Нимĕскер те ан чĕн.*

*Тен, юлашки вăл манччĕ.*

«Тӳпере çăлтăр нумай» [2, 117].

- *Эй, аппайкă! Хыв тухъя,*

*Кас шӳлкеме-кĕмĕлне.*

*Кĕрӳ каччи те туя*

*Саламатсăр кĕмĕ - ме!*

«Улатимĕр хапхи» [2, 59].

Çавăн пекех поэт сăввисенче ют чĕлхерен йышăннă междометисем пуррине те палăртмалла: *стой, ура, стоп, бис, браво.* Тĕслĕхрен:

*...Пĕр-икĕ çут пуçлăскер* - *ахăр бухгалтер* -

*Чĕкĕнтĕр пек хĕрелчĕçĕ ал çупупа*

*Пĕтĕм салона кăшкăрса тултарчĕç:*

*«Бис! Браво!». Шалт нэп чухнехи хупах!*

«Ăçталла ишетĕр» [3, 86].

*...Халал ĕç хыççăн кирлĕ темеççи*

*Хулпа хула явни те. Стоп! Пуçтарăн.*

*Экзамен, сăвă, хĕр...*

«Çурхи октавăсем» [2, 131].

*..Мухтав пирĕн партийĕн*

*Харсăрлăхне.*

*Ур-ра паттăр гвардийĕн*

*Çич çăлтăрне...*

«Çич çăлтăр юрри» [3, 36].

П. Хусанкай лексикин тепĕр палăрăмĕ вал - *аюх* междометипе тăтăшах усă курни. Ытти çыравçăсенне те, кулленхи калаçура та ку сăмаха эпир сайра хутра кăна асăрхатпăр:

*...Аюх! Калаймăн çав эс халь:*

*Çиçĕм-чĕлхӳ çинче*

*Вĕри чĕрӳн çулăм вăй-халь*

*Çунчĕ те... сивĕнчĕ.*

«Çеçпĕл Мишши чун хавалне» [2, 63].

*...Аюх! Манран ача пăхса пулаймĕ:*

*Пĕлӳ вăл - тĕнĕл... сăвă çавăрма...*

«Çурхи октавăсем» [2, 131].

*Анчах ĕç çыннин, аюх!*

*Нимĕ те çĕнни халь çук.*

«Хури» [4, 257]

Аслă сăвăç междометисемпе поэмăсенче те анлă усă курнă. Ку тĕлĕшпе унăн «Басмач» (1928-1934) поэмине асăнмалла. Пысăках мар хайлавра междометисем 37 хутчен тĕл пулаççĕ, поэмăн тĕп сăнарĕн ячĕ те междометирен пулнă иккен.

*Аннӳ сана çуратсанах*

*Таса куçне уçса пăхсассăн*

*«Ай!» пулнă малтанхи сăмах*

*Çампа яту халь Айнисса сан* [4, 141].

Çак хайлавра кăна эпир поэт икĕ междометие пĕр вăхăтра каланине сăнама пултаратпăр:

*...Ай-яй-яй-яй, ай, мйссăльман!*

*Тĕп пулчĕ йалт: Туран, Харесăм...*

*Тата, кун-çул, мĕнле тăшман*

*Кӳретĕн-ши пире халь эсĕ...* [4, 142].

Тишкернĕ мĕнпур хайлавран çакăнта çеç Хусанкай *ух, алла!* междометипе усă курать:

*...Пĕрре сасартăках яла*

*Çапла хыпар çитсс янратнă:*

*«Эмир çухалнă... Ух, алла!*

*Эмир Бухарана çаратнă»* [4, 144].

П. Хусанкай хайлавĕсене пăхса тухсан çакăн пек пĕтĕмлетӳ тума май пур. Междометисем - илемлĕ литература хайлавĕсенчи эмоцилĕх тумалли хатĕрсем. Вĕссмпе çыравçăсем анлăн усă кураççĕ.

П. Хусанкай хăйĕн сăввисемпе поэмисене 50 яхăн междомети кĕртнĕ. Вĕсем çаксем: *Ах! Ах-ах-ах/ Ну! (Ну-у!) Аюх! Эй! Ай-яй-яй! (Ай-яй-яй-яй!) Ура! (Ур-ра!) О! Ух! Ха! Е-е! Уй-юй! Тупата! Ай-хай! Э! Аха! И-и! Апаи! У! А! Эллс! Эх-хей! Ах, мур илесшĕ! Ах тур! Аçа çапасшĕ! Хай! Ай-ай! Ай-уй! Аху! Ай! Охо! Ай ту-рах! Амитке! Чим! Атя! (Атьăр!) Стои! Бис! Браво! Хас! Ме! Ти-ки-тики! Тпру! Вăси, вăси! Кăравул! Хурах!* Уйрăм междометисем миçе хутчен тĕл пулнине татса калама йывăр. Хăшĕсемпе поэт тăтăшах усă курнă *(Ах! Эх! Ну! Эй! Ха! Аюх! Ура! Ай-яй!*

*Ай! Атя!),* теприсем вара сайра курӑнаççӗ. Хайлавсенчи междометисем поэт сӑнлакан вӑхӑта, лирикӑлла героя ӑнланма пулӑшаççӗ.

ЛИТЕРАТУРА


1. *Андреев Н.А.* Чӑваш чӗлхин стилистики. 2-мӗш пайӗ. Морфологи. - Шупашкар: Чӑваш АССР кӗн. изд-ви, 1964. - 183 с.
2. *Хусанкай П.П.* Çырнисен пуххи. Пӗрремӗш том. Сӑвӑсем, ярӑмсем. - Шупашкар: Чӑваш кӗн. изд-ви, 1997. - 544 с.
3. *Хусанкай П.П.* Çырнисен пуххи. Иккӗмӗш том. Сӑвӑсем, ярӑмсем. - Шупашкар: Чӑваш кӗн. изд-ви, 2002. - 558 с.
4. *Хусанкай П.П.* Çырнисен пуххи. Виççӗмӗш том. Поэмӑсем. - Шупаш-кар: Чӑваш кӗн. изд-ви, 2002. - 542 с.